Урок теми:

**А.Кăлканăн «Алим» пьеси. Сăнарсем. Драма. Драма тытăмĕ.**

Урок эпиграфĕ:

**«Туслăхра — вăй та, çитĕнӳ те»**



# Сăнарсене çак йĕркепе уçса парăр

| Йĕрке | Алим | Сантăр | Санюк | Леврен мучи |
|---|---|---|---|---|
| Ĕçĕ-хĕлĕ | Çăлать, кĕтӳçĕ, тупать, тыткăна лекет, хăтăлать | Кĕтӳçĕ, туслашать, пулăшать, çитерсе парать | Кĕтӳçĕ, тарçа лекет, пĕлтерет | Кĕтӳçĕ, ачсене вĕрентсе пырать |
| Шухăшĕ-ĕмĕчĕ | Хĕрлисем патне çитесси, шуррисемпе çапăçасси, Чапаева курасси | Алима пулăшасси, Шуррисене çĕнтересси, Чапаева курасси | Аслашшĕне пулăшасси, юлташа пулăшасси | Пурнăç улшăнасса кĕтсе илесси |
| Кăмăлĕ | Ырă кăмăллă, ăслă, хăюллă , хастар, тавçăруллă, чее, | Шанчăклă, ыра кăмăллă, çирĕп шухăшлă, тепĕр чух иккĕленчĕк | Сăпайлă, ĕçчен хăюллă, ырă чунлă, чăтăмлă | Ырă чунлă, тарават, ăслă, кăмăллă, |
| Тыткаларăшĕ | Туслашать, сăмаха тытать, улталать, мухтанма юратмасть | Сăмаха тытма пĕлет,,хăйĕн чунне тӳрех уçса памасть | Çывăх çынсене юратать, пулăшать, асăрханулла | Васкамасăр калаçать,ачасене ăнланать, пулăшать, хĕрхенет |
| Автор характеристики | Юратать, шанать | Килĕштерет мухтать | Кăмăллать хĕрхенет | Ырлать, хаклать |

# Литература теорийĕ



**Драма--**пурнăçа геройсене е тĕрлĕ ушкăнсен хирĕçÿллĕ калаçăвĕпе ĕçĕ-хĕлĕ урлă сăнласа паракан пьеса.

**Ремарка--**геройсем мĕн тунине, ĕçсем хăçан, ăçта пулса иртнине çырса кăтартни.

**Явлени (курăну)**— выляканенчен кам та пулин тухса каять е пырса кĕрет

**Конфликт (хирĕç тăру)- драма никĕсĕ.** Геройсенчен пĕрисем çĕнтереççĕ, теприсем вилеççĕ.

**Действи, акт (ĕç-пуç)--** пьесăн пысăк пайĕсем

**Картина( ÿкерчĕк)**--пьесăн пĕчĕк пайĕсем

# Хайлав тытăмĕ






**Ĕç умĕ: ачасем кĕтӳ кĕтни, Алим Иван пиччепе тĕл пулни**

**Ĕç пуçламăшĕ:Иван пичче Алима пакет парса хăварни**

**Ĕç аталанăвĕ:Алим çĕнĕ юлташсем тупни, Санюк яла шуррисем килни çинчен пĕлтерни, Алимпа Сантăр пакет леçме кайни**

**Кульминаци: Алим тăшмана парăнманни, пакета вăхăтра илсе çитерни**

**Ĕç вĕçленĕвĕ: çĕнтерӳ. Ачасем Чапаева курни**

# Шухăшлар-ха…



Кам вăл Чапаев?

Алим Чапаева мĕншĕн юмахри паттăр вырăнне хурать?

Иван пичче парса хăварнă пакета Сахрун тимĕрçĕ патне вăхăтра çитерниинче камăн тӳпи пысăк-ши: Санюкăн, Алимăн е Сантăрăн?



# Хайлавсен пĕрпеклĕхĕпе уйрăмлăхĕсем

| **А.Кăлканăн «Алим» драми** | **А.Твардовскин «Рассаказ танкиста» сăвви** |
|---|---|
| Ĕçсем граждан вăрçи вăхăтĕнче пулса иртеççĕ | Ĕçсем Тăван çĕр-шыв Аслă вăрçи вăхăтĕнче пулса иртеççĕ |
| Тăшман тылĕнчи ачасем хĕрлисене кĕтеççĕ | Тăшман тылĕнчи ачасем салтаксене кĕтеççĕ |
| Ачасем пакета вăхăтра çитереççĕ, шуррисене пĕтерме пулăшаççĕ | Арçын ача танкистсене тăшман пушкине тĕп тума пулăшать |
| Ачасен ячĕсем пур | Ачан ячĕ çук |

**<u>Пĕтĕмлетӳ:</u>**

**Çĕнтерĕве çывхартма ачасем те хăйсен тӳпине хывнă**



ТУСЛĂХ
Тĕллев
Ăнлану
Вăй
Çĕнтерӳ
Килĕшӳ
Çитĕнӳ

# Килти ĕç

- *Икĕ енлĕ дневник çырăр*
- *«Алим» драмăри мана килĕшекен сăнарсем» сочинении çырăр.*
- *Алим, Сантăр,Санюк сăнарĕсем тăрăх синквейн çырăр.*

# Тивӗҫлине суйла

**Эсӗ хӑш шухӑшпа килӗшетӗн?**

1. Эпӗ йывӑрлӑхран хам тӗллӗн тухаймарӑм.
2. Маншӑн йывӑрлӑх пулмарӗ.
3. Эпӗ ыттисен сӗнӗвӗсене итлерӗм ҫеҫ.
4. Эпӗ хам сӗнӳсем патӑм.
5. Эпӗ урокра активлӑ пултӑм, урок кӑмӑла ҫӗклерӗ.
6. Маншӑн урок вӑрӑм пулчӗ.
7. Уркри материал усӑллӑ пулчӗ.
8. Маншӑн урок хӑвӑрт иртрӗ.

EPSVECTOR.RU